26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 МАРТ 2 ЫТЛАРИКУН 49(6286) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ТРАКТОРИСТКĂСЕН ĂМĂРТĂВНЕ АНЛĂН САРАР

Иртнĕ çул хĕрарăмсен трактор бригадисем тата трактористкăсем хушшинче пуçланса кайнă социализмлă ăмăрту питех те паха результатсем пачĕ, пĕлтĕрхи ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлеме пулăшрĕ. Пирĕн республикăри хĕрарăмсен трактор бригадисем тата хĕрарăм трактористкăсем пурте ăмăртăва тухрĕç. Республикăри хĕрарăм-трактористкăсен 14 бригади иртнĕ çулта 20.670 гектар ĕçленĕ, трактор ĕçĕсен планне вĕсем 103,6 процент пурнăçа кĕртнĕ. Пуринчен те паха результатсем ăмăртура Вăрмар МТС-ĕнчи хĕрарăмсен трактор бригади кăтартнă, вăл плана 143 процент пурнăçа кĕртнĕ тата 827 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Комсомольски МТС-ри хĕрарăмсен трактор бригади (бригадирĕ Новикова) плана—135 процент, Кувакино МТС-ĕнчи хĕрарăмсен трактор бригади (бригадирĕ Балденкова) — 118 процент тултарнă. Çавăн пекех Елчĕк МТС-ĕнчи хĕрарăм трактористкăсем те паха ĕçсем тунă. Ăмăртăва хутшăннă 39 хĕрарăм-трактористкăран 33 трактористка тракторпа ĕçлемелли çулталăкри плана ирттерсе тултарнă. Пĕтĕмĕшпе илсен, хĕрарăм-трактористкăсем хăйсен планне кунта 119,5 процент пурнăçа кĕртнĕ, 4.081 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Ку МТС-ри трактористка Анна Гордеева юлташ планпа пăхнă 179,5 гектар вырăнне 468 гектар сухаланă, 885 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Çавăн пекех Тăвай МТС-ĕнчи Дарья Ермолаева трактористка та, парти членĕн ятне производствăра çӳлте тытса пырса, тракторпа ĕçлемелли плана 258 процент пурнăçа кĕртнĕ, 945 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Унăн юлташĕ Евдокия Петрова плана 222 процент тултарса, 790 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. 17 çулхи комсомолка Нина Кузьмина, тракторпа малтанхи çул ĕçлесе, çулталăкри плана 179 процент пурнăçа кĕртнĕ, 22 процент горючи перекетлесе хăварнă.

Хĕрарăм-трактористкăсен паха ĕçне кăтартакан çакăн пек тĕслĕхсем татах та нумай. Анчах çаксем те вĕсем пирĕн совет патриоткисем, вĕсене лайăх вĕрентсе хатĕрлесен тата вĕсемпе ĕçре тĕрĕс усă курсан, тĕлĕнмелле паха ĕçсем тума пултарнине кăтартса парать.

Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсемпе, отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи пирĕн паттăр воинсен чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, Рязань облаçĕнчи Рыбновски МТС-ри хĕрарăм-трактористкăсен Дарья Гармаш ертсе пыракан бригади çĕршыври мĕнпур трактористкăсене хĕрарăмсен трактор бригадисен тата хĕрарăм-трактористкăсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне татах та анлăнрах сарса яма чĕнсе каларĕç.

Дарья Гармаш бригадинчи трактористка-хĕрсем чĕнсе калани çине пирĕн республикăри малта пыракан трактористкăсемпе комбайнерсем те сиккĕнчех ответлерĕç. Вĕсем çав чĕнĕве трактористкăсен пĕрлехи пухăвĕсенче, хĕрарăмсен трактор бригадисенче пысăк çĕкленӳпе сӳтсе яваççĕ. Трактористка Кудрявцева юлташ (Шупашкар МТС-ĕ) иртнĕ çулта лайăх ĕçленĕшĕн «Социализмлă ялхуçалăхĕн отличникĕ» значокпа наградăланăскер, Дарья Гармаш бригади чĕнсе калани çине ответлесе, хăйĕн сменинче, çемçе ака çине куçарса шутласан, çулталăкне 550 гектартан ĕç тума тата 15 процентран кая мар горючи перекетлесе хăварма сăмах панă. Унăн тракторне халĕ пысăк пахалăхпа юсаса лартнă, трактор çумне кăкарса ĕçлемелли инвентаре те юсаса йĕркене кĕртнĕ. Кудрявцева юлташ, паян тесен, паянах уйхир ĕçне тухма хатĕр. Сĕнтĕр МТС-ĕнче, Дарья Гармаш бригади чĕнсе каланине хĕрарăм-трактористкăсен пухăвĕнче сӳтсе явнă хыççăн, Мария Матвеева юлташăн бригади, хăйĕн иртнĕ çулхи ĕç планне 129 процент пурнăçа кĕртнĕскер, кăçал кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 500 гектартан сахал мар сухалама, 10 процент горючи перекетлесе хăварма тата кашни комбайнпа 250-шар гектар тырă вырса пуçтарма сăмах панă. Трактористкăсем О. Андреева, А. Ефимова, К. Родионова хăйсен тракторĕсемпе кашни 600-шер гектартан кая мар сухалама пулнă.

Дарья Гармаш бригадинчи трактористкăсем чĕнсе каланине тата Мускав облаçĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксем çырнă çырăва сӳтсе явнă хыççăн, Шăхасан МТС-ĕнчи хĕрарăм-трактористкăсем те, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине пысăк обязательствăсем илнĕ. Вĕсем кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 800 гектартан кая мар сухалама, çуракине, тырпул пухса кĕртес ĕçе, ирхи çĕртмепе кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсене чи кĕске срокçенче тата пысăк пахалăхпа туса иртерме, горючипе сĕрмелли материалсене 10 процентран кая мар перекетлесе хăварма, простойсене пĕтерме, тракторсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрассине çирĕп график тăрăх туса пыма сăмах панă.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ хĕрарăмсен трактор бригадисен тата хĕрарăм-трактористкăсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне организацилес тĕлĕшпе панă сĕнĕвĕсенче ăмăрту итогĕсене тумалли вăхăт срока палăртрĕ. Çав итогсене çураки пĕтернĕ хыççăн—июлĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, тырпулсене пухса кĕртнĕ хыççăн — ноябрĕн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр тата ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн тумалла пулать.

МТС-сен политотделĕсем çулталăк хушши ĕçлесе социализмлă ăмăртăва ертсе пырас тĕлĕшпе организацилле тата политикăллă опыт сахал мар пухрĕç. Çав опыта пур енĕпе те тĕплĕн шута илсе, унпала малашнехи ăмăртура анлăн усă курмалла. Дарья Гармаш бригади чĕнсе каланине кашни трактористкăна ăнлантарса памалла. Хĕрарăмсен трактор бригадисен ăмăртăвне кашни бригада, кашни трактористка хутшăнма тивĕçлĕ.

МТС политотдел начальникĕсен комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕсен тата комсомолăн МТС-сенчи организацийĕсен хĕрарăмсен трактор бригадисен социализмлă ăмăртăвне куллен ертсе пымалла, трактористсен вĕренĕвне организациленĕ çĕре активлăн хутшăнмалла, трактористсене культурăпа йăла тĕлĕшĕнчен кирлĕ условисем туса парассишĕн тăрăшмалла, илнĕ обязательствăсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине куллен тĕрĕслесе тăмалла, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опытне анлăн сарса пымалла. Ăмăрту результачĕсене яланах пуриншĕн те курăнмалла тăвассишĕн тăрăшмалла, кашни трактористка, кашни бригада хăйĕн обязательствисене мĕнле пурнăçа кĕртнине куллен тĕрĕслесе тăмалла.

Çуракине хатĕрленесси вăл—вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен политикăллă питех те пысăк кампани пулса тăрать. Ялхуçалăх ĕçĕсене мĕнпур колхозниксемпе çамрăксен вăйне хутшăнтармалла. Çуракине лайăх хатĕрленсе тухса, ăна ăнăçлăн иртересси — ялти çамрăксен тăван çĕршывпа фронт умĕнчи патриотла тивĕçлĕхĕ пулса тăрать.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔНЧЕН

СССР Верховный Совет Президиумĕ Совет Государствине тăвакан паллă çынсенчен пĕри, СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн заместителĕ, Узбек ССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Юлдаш Ахунбабаев вилни çинчен хытă хурланса пĕлтерет.

СССР Верховный Совет Президиумĕ.

ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔПЕ СССР ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕТĔНЧЕН

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральный Комитечĕ тата СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Совет Государствин паллă деятелĕсенчен пĕри, СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн заместителĕ, Узбек ССР Верховный Совет Президиумĕн Председателе Ахунбабаев юлташ вилни çинчен питĕ хурланса пĕлтерет.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ.
ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. СТАЛИН юлташ Польша посолне РОМЕР господина йышанни

Февралĕн 26-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Польша посолне Ромер г-на йышăннă.

Калаçура Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ пулнă.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Тăшманăн ДЕМЯНСК районĕнчи çирĕплетнĕ плацдармне пĕтерни

1941 çулхи сентябрь уйăхĕнче нимĕçсен фашистла войскисем Ильмень кӳллинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре татса кĕме, нимĕçсен 16-мĕш армин вăйĕсемпе ЗАЛУЧЬЕ—ЛЫЧКОВО—ДЕМЯНСК районне йышăнма тата хĕвелтухăçнелле ВЕЛЬЕПЕ СЕЛИГЕР кӳллисен сыранĕсем патне тухма пултарнă. Ун хыççăнхи 17 уйăх хушшинче тăшман хăй тытса илнĕ плацдарма хăй аллинчех хăварма çине тăрсах тăрăшнă, ăна çирĕп тĕреклетнĕ район туса хурса «Демянск крепоçĕ» тесе ят панă. Çав çирĕплетнĕ районпа нимĕçсем пирĕн войскăсен çурçĕрти группин питех те кирлĕ коммуникацийĕсене пырса çапнă çĕрте усă курма шутланă. Çав вăхăт хушшинчех асăннă район пĕр хутчен çеç мар хаяр çапăçусен вырăнĕ пулнă. Çав вырăнта нимĕçсен дивизийĕсене пайтах шĕкĕлченĕ.

Çак кунсенче Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн войскисем, маршал ТИМОШЕНКО командир пулса ертсе пынипе, нимĕçсен 16-мĕш армине хирĕç наступлени пуçласа ячĕç. Çапăçусем пынă вăхăтра пирĕн войскăсем, тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ вырăнне чылай участоксенче татса, нимĕçсен фашистла войскисене икĕ сийпе хупăрласа илес хăрушлăх туса хучĕç. Çавăрса илес хăрушлăха туйса илсе, тăшман, пирĕн войскăсем пыра-пыра çапнипе, васкасах хĕвеланăçнелле чакма пуçланă.

Сакăр кун хушши пынă çапăçусенче, тăшмана пĕр чарăнмасăр хăваласа пырса, пирĕн войскăсем халăх пурăнакан 302 пункта ирĕке кăларчĕç. Вăл шута ДЕМЯНСК хули тата ЛЫЧКОВОПА ЗАЛУЧЬЕ район центрĕсем кĕреççĕ. Тăшмантан 2.350 тăваткăл километр территори тасатнă.

Сакăр кун хушши пынă çапăçусенче пирĕн войскăсем нимĕçсен 3.000 салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна илнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех çакан пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: самолетсем — 78, танксем — 97, тĕрлĕ калибрлă орудисем — 289, пулеметсем — 711, çавăн пекех тата боеприпассем пит нумай, ытти тĕрлĕ çар япалисем нумай тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 8.000 ытларах вилли выртса юлнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 28-мĕшĕнче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

Иртнĕ эрнере февралĕн 21-мĕшĕпе 27-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче тата тăшманăн аэродромĕсенче нимĕçсен 168 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 87 самолет пĕтнĕ.

* * *

Февралĕн 27-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, тăшманăн 14 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсем йышăннă позицисене тĕреклетсе тăнă, уйрăм участоксенче тăшман çине персе тăнă. Н-ски соединени кун каçа нимĕçсен 150 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Гварди лейтенанчĕн Глуховăн танк экипажĕ (механик-водитель старши сержант Борисов, башня стрелокĕ сержант Носков тата пулеметчик сержант Писарев) тăшман тăракан вырăна çĕмĕрсе кĕнĕ те темиçе вуншар гитлеровеца пĕтерсе тăкнă тата 8 оруди тытса илнĕ. Пулеметчик Догадин юлташ темиçе черет персе ярса нимĕçсен пĕр самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Н-ски соединенин чаçĕсем 2 кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă 3 танкне персе çĕмĕрнĕ тата хăй тĕллĕн çӳрекен 2 орудине тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем нимĕç пехотин батальонĕ тунă контратакăна сирсе янă. Гитлеровецсем пысăк сухатусем тӳснĕ, вара хăйсен малтанхи позицийĕсем патне чакнă.

* * *

Краматорская районĕнче пирĕн войскăсем тăшманăн танкĕсемпе мотопехотин хаяр контратакисене сирсе тăнă. Нимĕçсем васкаса çĕнĕ чаçсем илсе пыраççĕ те вĕсене тӳрех çапăçăва кĕртсе яраççĕ. Пĕр участокра пирĕн боецсем гитлеровецсен 5 контратакине сирсе янă, нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра халăх пурăнакан пĕр пунктшăн кунĕпех вăйлă çапăçу пынă, çав пункт темиçе хутчен аллăран алла куçнă. Каçалапа совет подразделенийĕсем халăх пурăнакан çав пунктра вăйлăн çирĕпленсе ларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 500 ытла вилли, нимĕçсен çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ 13 танкĕ тата автомашинăсем нумай выртса юлнă.

* * *

Харьковран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Н-ски соединенин чаçĕсем татăклăн атакăласа халăх пурăнакан 2 пысăк пункта тытса илнĕ. Артиллери складне тата тырă складне тытса илнĕ. Пирĕн танксен пĕр ушкăнĕ шоссе çулне пӳлсе лартнă та тăшманăн каялла чакмалли çулĕсене татса хунă. Нимĕç пехотин пырса çитнĕ батальонне пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă. 9 оруди, 17 автомашина тата тĕрлĕ грузсем тиенĕ 36 лав тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Курскран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă. Халăх пурăнакан пысăк пункт патĕнче Н-ски часть 3 кун ĕнтĕ тăшманпа хаяррăн çапăçать. Çав вăхăт хушшинче гитлеровецсен 2 батальонне ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Витебск облаçĕнче кĕрешекен отрядри партизансен ушкăнĕ февраль вăрринче нимĕçсен çулпа пыракан обозне сасартăк тапăннă. Партизансем 30 гитлеровеца вĕлернĕ тата боеприпассем турттарса пыракан 6 лава пĕтерсе тăкнă. Партизансен тепĕр ушкăнĕ халăх пурăнакан пунктра нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă. Совет патриочĕсем продовольстви складне çунтарса янă тата 20 гестаповеца вĕлернĕ.

Минск облаçĕнчи партизансен отрячĕ чугунçул станцинче тавар базине тата продовольстви складне çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсен 299-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 528-мĕш полкăн 11-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Эвальд Пихлер çапла каласа панă: „Пирĕн полк пĕр йĕркесĕр каялла чакрĕ, вăл пысăк сухатусем тӳсрĕ. Пур подразделенисем те тенĕ пекех хăйсен хĕçпăшалĕсене тата автомашинисене пăрахса хăварнă. Пехотнăй орудисен 13-мĕш роти тăрса юлнă 6 туппа сирпĕнтерсе янă. 3-мĕш батальонра 300 çын ытла вилнĕ. Хĕвелтухăç фронтĕнче нимĕç войскисен ĕç ăнăçманнине тата вĕсем пораженисем тӳснине пула салтаксен пĕр пайĕн шухăш-кăмăлĕсем пăсăлчĕç. Вырăс войскисем Сталинград патĕнче нимĕçсен 6-мĕш армине çавăрса илсе пĕтерсе тăкнине пĕлнĕ хыççăн эпир халь ялан хăраса çӳретпĕр. Кирек хăçанах та пире хупăрласа илнĕ пек туйăнса тăрать. Пире Сталинград патĕнче нимĕç дивизийĕсене аркатса тăкнă пек аркатса тăкассăн туйăнать. Хамăра хамăр шанмастпăр ĕнтĕ. Нумайĕшĕ çапла шутлаççĕ: нимĕç çарĕ вырăссене хирĕç тытăнса тăраяс çук теççĕ“.

* * *

Грецири партизансен пысăк отрячĕ, Греци çарĕн полковникĕ ертсе пыраканскер, оккупантсен Колабакири гарнизонне атакăланă. Виçĕ кун хушшинче Греци патриочĕсем тăшмана пысăк сухатусем тӳстерне. Партизансем çав хулана тытса илнĕ, нимĕçсемпе итальянецсен 50 салтакне тыткăна илнĕ.

Мартăн 1-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Мартăн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем тăшман çине персе тăнă. Пирĕн артиллерипенипе тата миноментсенчен персе нимĕçсен темиçе дзотне, артиллерин 3 батарейине, 5 миномета тата 18 пулемета пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçăн боецĕсем тăшман пехотин пĕр ротине аркатса тăкнă, 3 бронемашинăна персе çĕмĕрнĕ тата боеприпассемпе çар хатĕрĕсем тиенĕ 15 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн авиаци, сывлăшра çапăçса, тата пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен 16 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Н-ски часть нимĕç пехотин контратакине сирсе янă та, каялла чакакан гитлеровецсене хăваласа пырса, халăх пурăнакан пĕр пункта тытса илнĕ. Нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ. Тыткăна илнисем пур тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Харьковран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, наступленилле çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Çав пунктсенчен пĕриншĕн пынă çапăçура кăна тăшманăн икĕ ротине аркатса тăкнă тата трофейăсем тытса илнĕ, трофейăсем хушшинче сыхăну полкĕн пурлăхне тиенĕ 23 автомашина пур. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем тăшман вирлĕн хирĕç тăнине çĕнтерсе малалла куçнă, трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Курскран хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем наступленилле çапăçусем туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Пĕр участокра гитлеровецсем контратака тунă, анчах та ăна пирĕннисем сирсе янă, çапăçу хирĕнче гитлеровецсен 200 виллине çити выртса юлнă. Пирĕннисем 3 оруди, шултăра калибрлă 2 пулемет, 6 миномет, тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем артиллерин 5 складне тата продовольствипе выльăх апачĕн складне тытса илнĕ, çак юлашки складра тулăпа сĕлĕ 500 тоннăна çити пулнă.

* * *

Украинăри районсенчен пĕринче кĕрешекен «За родину» ятлă отрядри партизансем пĕр паха чугунçул сывăхĕнче ларакан ялшăн пынă çапăçура нимĕçсен 100 салтакне ытла вĕлернĕ. Тепĕр отрядри партизансен ушкăнĕ тăшманăн 2 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 2 паровоз тата 49 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Нимĕçсен 4-мĕш горнострелковăй дивизийĕнчи 13-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтак Фриц Кайзер çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи каялла чакса пырать, эпир ăçта чарăнассине никам та пĕлмест. Горючи çитмен пирки командовани автотранспортăн 60 процентне çунтарса яма хушрĕ. Чылай хĕçпăшалсене, боеприпассене тата паха пурлăха эпир пĕтерсе хума ĕлкĕреймерĕмĕр, вĕсем вара вырăссен аллине лекрĕç. Германи çарĕ Кавказра тата Кубань çинче поражени тӳснипе салтаксен шухăш-кăмăлĕсем сисĕнмеллех пăсăлчĕç. Вăраха кайнă вăрçă пирки тарăхнине часрах та часрах илтме пулать. Нумаях пулмасть обер-ефрейтор Штерн кăтартнипе темиçе салтака офицера персе вĕлерчĕç, çав салтаксемпе офицерсем пĕр-пĕринпе вырăссене тыткăна парăнма каласса татăлнă пулнă. Темиçе кун иртсен вара çав Штерн обер-ефрейторăн виллине тупнă».

Аслă Сталинăн приказĕ— Тăван çĕршывăн приказĕ

ÇĔМĔРЛЕ, мартăн 1-мĕшĕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа панă приказа сӳтсе-явнă май, предприятисемпе колхозсенче митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ. Вĕсенче рабочисемпе колхозниксем çĕршывпа фронта ытларах пулăшас тĕлĕшпе хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ.

Çĕмĕрле чугунçул станцийĕнче ĕçлекенсем кашниех техникăллă эксплоатацин правилисене çирĕппĕн пăхăнса ĕçлеме, поездсене пĕр минута та простой тутармасăр, график тăрăх çӳреме обязательство илчĕç.

Çĕвĕ çĕлекен мастерскойăн коллективĕ çулпуçăн приказне февраль уйăхĕнчи программăна 116,3 процент пурнăçланипе кĕтсе илчĕ. Рабочисем халĕ Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Стахановецсем Пименова, Федоров, Гришина, Кириллова, Тургенев юлташсем кулленех икшер çыншăн ĕçлеççĕ.

«Труженик» заводăн коллективĕ февраль уйăхĕнчи производство планне 104,3 процент тултарчĕ. Заводри рабочисемпе работницăсем тата инженерла-техникла работниксемпе служащисем март уйăхĕнче тата тухăçлăрах ĕçлеме обязательство илчĕç.

Верховный Главнокомандующин приказне сӳтсе-явнă хыççăн колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç вăйланчĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, сăмахран, çуракине тухма тĕплĕн хатĕрленсе çитрĕç. Колхоз çураки валли 12 плуг, 27 сӳре, 2 сеялка, 26 стан урапа хатĕрлесе хучĕ. Вăрлăх çителĕклех, ăна сортланă тата шăтарса пăхнă. «1-ое Мая», «Молния», «Сила» тата «Ударник» колхозсем, вăрлăхсене хатĕрлесе çитернипе пĕрлех, ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтерчĕç. Асăннă колхозсем вăрман хатĕрлемелли плана мартăн 15-мĕшĕ тĕлне пурнăçлама сăмах пачĕç.

Çĕмĕрле комбиначĕ февраль уйăхĕнче çĕршыва планран иртерсе пиншер тенкĕлĕх продукци пачĕ. Халĕ рабочисем социализмлă ăмăртăва татах та вăйлăн сарса ячĕç. Комбинатра фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх пуçланчĕ. Рабочисемпе работницăсем стахановла вахтăна тăчĕç.

Х. ЛИСИН.

Таварçаврăнăш планне 150 процент тултарнă

ШĂХАСАН. Матьшу сельповĕнче тата унăн колхозсенчи отделенийĕсенче ĕçлекенсем ăмăртăва хутшăнса, таварçаврăнăшĕн пĕрремĕш кварталти планне Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă кун тĕлне пурнăçлама конкретлă обязательствăсем илнĕччĕ.

Илнĕ обязательствăсене Матьшу сельпо коллективĕ чыслăн пурнăçларĕ. Февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне Матьшури тĕп лавкара ĕçлекен продавщица О. Павлова хăйне панă плана 142 процент, Шугурово отделенийĕнче ĕçлекен продавщица Н. Филиппова 138 процент тултарчĕç. Пĕтĕмĕшпе илсен, Матьшу сельповĕ пĕрремĕш квартал планне февралĕн 15-мĕше тĕлне 109 процент тултарчĕ, Хĕрлĕ Çар кунне плана 150 процент таран пурнăçларĕ.

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ февралĕн 23-мĕшĕнче панă приказа итленĕ хыççăн сельпо коллективĕ ăмăртура татах та пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн ĕçлеме тытăнчĕ.

С. Смирнова.

Танксен „Связист“ ятлă колоннине тума

ЕЛЧĔК. Çыхăну конторинчи ĕçлекенсем танксен «Связист» ятлă колоннине тума 3.790 тенкĕ укçа пухрĕç. З. Беляевпа И. Смирнов юлташсем çак ĕç валли кашниех пĕр уйăхри ĕçукçине пачĕç.

М. Дергачев.

Хĕрлĕ Çар фондне

„Синьялы“ колхоз (председателе Н. Ильбаторкин юлташ) 1943 çулшăн государствăна 1402 килограмм аш-какай парса, обязательствăна 80 процент пурнăçларĕ.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, колхоз Хĕрлĕ Çар фондне 573 килограмм аш-какай хывре. (Ишлей, „Колхозник хаçачĕ“).

Чемолосов профессорăн юбилейне чысласа ирттерни

Февралĕн 28-мĕшĕнче республикăри общественность Чăвашсен трахоматознăй институтĕн научнăй руководителĕ, медицина наукисен докторĕ—Алексей Степанович Чемолосов профессор çуралнăранпа 75 çул, медицина наукинче ĕçлеме пуçланăранпа 50 çул тултарнине чысласа ирттерчĕ.

Каçхине 8 сехетре юбилее паллă туса ирттерме Советсен çуртне республикăри партипе совет тата обществăллă организацисен, çар чаçĕсен представителĕсем, Шупашкар хулинчи медицина работникĕсем пухăнчĕç.

Залра ларакансем юбиляра алă çупса ăшшăн кĕтсе илчĕç.

Пухăва ертсе пыраканĕ Чăваш АССР Совнарком Председателĕн заместителĕ Евлампьев юлташ Алексей Степанович Чемолосов профессорăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен пĕлтерме В. Обухов доктора сăмах парать.

— Хисеплĕ юбилярăн пурнăçĕ вăрăм та пуян,—тет Обухов юлташ.—Унăн кунçулĕ тӳрĕ кăмăлпа тата хĕрӳллĕн ĕçленипе паларса тăрать. Врач ĕçĕнче тата медицина наукинче нумай çулсем хушши тухăçлăн ĕçленĕшĕн тата трахомăна хирĕç кĕрешес ĕçри тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсемшĕн Алексей Степановича пĕр хут кăна мар наградăсем панă, пĕр хут кăна мар унăн ĕçне чысланă. Пысăк культурăллă, авторитетлă учитель-врача, вăл çуралнăранпа 75 çул тултарнă майпа, СССР Верховный Совет Президиумĕ Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăларĕ, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ ăна Чăваш АССР наукăсен тава тивĕçлĕ деятелĕн званине пачĕ.

Обухов юлташ юбиляра нумай çулсем хушши пурăнма сывлăх сунать, нумай çулсем хушши усăллăн ĕçлеме ырă сунать.

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ Алексей Степанович Чемолосов профессора Чăваш АССР Совнаркомĕ тата ВКП(б) Обкомĕ ячĕпе саламлать.

— Ĕçсыннисен ырă пурнăçĕшĕн малашне те нумай çулсем хушши ĕçлеме сывлăх сунатăп сире, Алексей Степанович,—тет Ахазов юлташ.

Чăваш АССР Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссарĕ Лихачев юлташ СССР Верховный Совет Президиумĕ Алексей Степанович Чемолосов профессора Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăласси çинчен 1943 çулти февралĕн 22-мĕшĕнче йышăннă Указа вуласа парать.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ юбиляра Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ ячĕпе саламлать.

— Хисеплĕ Алексей Степанович,—тет З. А. Андреева юлташ,—медицина наукинче 50 çул хушши ĕçленине шута илсе, трахомăна хирĕç кĕрешес ĕçре уйрăмах паллă тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн Сире Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ Чăваш АССР наукăсен тава тивĕçлĕ деятелĕн званине пачĕ. Халăх сывлăхне сыхлас, чăваш ĕçсыннийĕсене трахома чирĕнчен пĕтĕмпех сыватса çитерес тĕлĕшпе нумай çулсем хушши ĕçлеме сире çирĕп сывлăх сунатпăр.

Юбиляр патне саламлă телеграммăсем нумай килнĕ. ЧАССР Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссарĕн заместителĕ Мочалов юлташ Алексей Степанович Чемолосов профессор патне СССР Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссарĕ Митерев юлташ, РСФСР Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссарĕ Третьяков юлташ янă саламлă телеграммăсене вуласа парать.

ВКП(б) Шупашкар Горкомĕн секретарĕ Федоров, чăвашсен трахоматознăй институтĕн директорĕ Шульпенкова юлташсем юбиляра саламлаççĕ.

— Алексей Степанович, республика общественноçĕ паян сирĕн пурнăçри питех те паллă куна чыслать,—тет Шульпенкова юлташ.—Сирĕн юбилей Чăвашсен трахоматознăй институчĕ уçăлнăранпа 5 çул тултарнипе пĕрле килсе тухрĕ. Эсир, унăн научнăй руководителĕ пулса тăрса, институт ĕçшĕн нумай тăрăшрăр. 5 çул хушшинче институт 41 врач, 160 фельдшер хатĕрлерĕ, темиçе врач куç чирĕнчен сыватмалли ăсталăха вĕренчĕç. Институт 25 научнăй темăна татса пачĕ, научнăй конференцисем чылай ирттерчĕ, научнăй ĕçсен сборникне кăларчĕ. Институт куç чирĕнчен сыватас тĕлĕшпе те ĕçлерĕ. Институт амбулаторийĕ витĕр 250.000 çын тухнă, стационарта 6.000 çынна яхăн сывалнă, куç чирĕнчен сыватас тĕлĕшпе 5.500 яхăн операци тунă.

Ун хыççăн Чемолосов юлташа „Медсантруд" Союзĕн Республикăри комитечĕн председателĕ Грачева, трахоматознăй институтри местком председателĕ Клементьева тата доктор П. Н. Осипов юлташсем саламларĕç.

Профессор Чемолосов юлташ патне „Медсантруд" Союзĕн Центральный Комитечĕ, академик Авербах тата юбилярăн вĕренекенĕсемпе тăванĕсем, Патăр"ел, Куславкка больницисен заведующийĕсем янă телеграммăсене медицина наукисен кандидачĕ Гутман юлташ вуласа пачĕ.

Евлампьев юлташ хисеплĕ юбиляра—Алексей Степанович Чемолосов профессора сăмах парать.

— Мана çакăн пек хисеп тунипе эпĕ хумханса савăнатăп,—тет юбиляр.—Çак хисепшĕн партипе правительствăна тав тăватăп, трахомăна хирĕç кĕрешес, халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе малашне те ырми-канми ĕçлеме пулатăп.

Зал Алексей Степанович Чемолосов профессора тăвăллăн алă çупса саламлать.

П. НИКОЛАЕВ.

Вăрçă вăхăтĕнчи налога тӳлеççĕ

СЕНТЕРВĂРРИ. Юрдакасси ялсоветĕнчи „Искра" колхоз членĕсем 1943 çулти укçа-тенкĕ парăмĕсене хăвăртрах парса татассишĕн тăрăшаççĕ.

Хĕрлĕ Çар пур фронтсенче те ăнăçлă наступлени туса пынипе хавхаланса, Н. Семенов, А. Васильева, Т. Назарова, С. Федоров колхозниксем вăрçă вăхăтĕнчи налога извещенисем илсенех тӳлесе татрĕç. Çавăн пекех кунти колхозниксем культсбор тата самобложени укçисене те вăхăтра тӳлесе пыраççĕ.

Н. Константинов.

Çуракине хатĕрленес ĕçре малта пыракан колхозсенчен юлмалла мар

ЙĔПРЕÇ. „МОПР" колхоз членĕсем 1943 çулта Хĕрлĕ Çар валли, тăван çĕршыв валли пысăк тухăçлă тырпул туса парас тесе хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе кунта кашни бригада пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлет. „МОПР" колхоз „Коммунар" колхоза социализмла ăмăртса ĕçлеме чĕннĕ.

„МОПР" колхоз пĕр январь уйăхĕнче çеç хăйĕн уйне пин лав ытла тислĕк кăларнă, тырăсене апатлантарма 100 центнер ытла кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата кĕл хатĕрлесе хунă. Çуракинче акмалли вăрлăхлăх тырăсем хатĕр. Вĕсене сортланă, шăтас пахалăхне тĕрĕслесе, акмалли кондицие лартнă. Колхоз çуракинчи ĕçсен планне туса çирĕплетнĕ. Акмалли çĕр лаптакĕсене, унта мĕнле тырăсем акмаллине бригадăсене кăтартса панă. Кашни бригадăрах звеносем тунă. Агротехникăна вĕренмĕ кружок организациленĕ.

Малта пыракан колхозсен тимĕрçисем ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе ăмăртса туса пыраççĕ. „Коминтерн" колхозăн тимĕрçи Кураков юлташ хăйĕн колхозĕнчи мĕнпур машинăсене пурне те юсаса, ĕçе юрăхлă туса лартрĕ. Халĕ вăл Ленин ячĕпе тăракан колхозăн машинисене юсама тытăнать.

Районри „Молния", „Правда", „Большевик" колхозсем те çуракине пысăк çĕкленӳпе хатĕрленсе пыраççĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă куна çуракине пур енлĕн тĕплĕн хатĕрленсе çитнипе паллă тăваççĕ. Анчах та, пĕтĕмĕшпе илсен, районри чылай колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç кирлĕ хăвăртлăхсемпе пулса пымасть-ха. Районра 9 колхоз вăрлăх фончĕсене пур йышши тырăсем енĕпе те уйăрса çитермен. Вăрлăхлăх тырă районри колхозсенче çителĕклĕ пулсан та, Молотов ячĕпе тăракан, „10 лет Октября", „Социализм" колхозсем хăйсене çитмен вăрлăхсене улăштарса илме васкамаççĕ. Ку колхозсенче çуракине хатĕрленес енĕпе ытти ĕçсем те юлса пыраççĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз хĕллехи вăхăтра уя кăлармалли тислĕкĕн çуррине те кăларманха, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата кĕл пухма, минераллă удобренисем турттарма, торф кăларма тытăнман.

Калинин ячĕпе тăракан колхозăн тимĕрçи, кăмрăк çук тесе, ялхуçалăх машинисене юсама халĕ те тытăнман. Районри лесхозăн „Кооплеспром" артелĕнче кăмрăк темĕн чухлех, ăна артель колхозсене парать.

Çуракине хăвăрт туса ирттерме лашасем вăйлă пулни питĕ кирлĕ. „Красный фронтовик" колхозăн конюхĕсем çакăншăн тăрăшаççĕ те. Лашасен ĕçлес пахалăхне пăхса тухнă хыççăн вĕсем колхоз правленине 60 лашана халех уйăрса тăратса, уйрăм апат парса тăмалла тутарчĕç. Çапла колхозăн кашни лаши çуракине самăр тухать. Анчах та „Комбайн", „Красный металлист", „Искра" тата ытти хăшпĕр колхозсенче лашасене пăхас ĕçе халĕ те йĕркелесе яман-ха.

Районри пур колхозсен те çуракине хатĕрленес ĕçе лайăхрах та хăвăртрах туса пымалла. Малта пыракан колхозсенчен юлмалла мар.

Д. Михайлов.

Эпир çуракине тухма хатĕр

Пирĕн колхозăн вăрлăх çитменни правлени членĕсене чылай шухăшлаттарчĕ. Анчах çак ыйтăва та эпир ăнăçлăн татса патăмăр.

Колхоз иртнĕ çура пысăк тухăçлă утă çулса илчĕ. Эпир ăна мĕн чухлĕ хатĕрлеме пултарнă таранах хатĕрлерĕмĕр. Пĕр пайне вара выльăх апачĕ çитмен колхозсене кайса хамăра кирлĕ вăрлăхсемпе улăштартăмăр. Çапла вара чи пысăк ыйтăва—вăрлăхсем хатĕрлес ĕçе пурнăçларăмăр. Халĕ ĕнтĕ пирĕн пур кирлĕ вăрлăхсем те пур, вĕсене сортланă, шăтарса пăхнă.

Çак вăхăтрах эпир çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ытти ĕçсене те куллен туса пытăмăр. Колхоз тимĕрçи П. Давыдов юлташ хĕрсех ялхуçалăх машинисене юсарĕ, вăтă колхозниксем Д. Ермишинпа Ф. Мачкасин лаша таврашĕсене, вĕрен-урхалăхсене юсарĕç, çĕнĕрен яврĕç. Çапла вара паянхи кун тĕлне пирĕн колхоз çуракине тухма хатĕрленсе çитрĕ. Акана эпир паян тесен паянах тухма хатĕр.

Анчах колхозниксем тунă ĕçсемпе лăпланса лармаççĕ. Çураки вăхăтĕнче уйрăмах лаша таврашĕсем ытларах кирлĕ пулма пултарнине шута илсе, эпир кашни лаша валли темиçешер йĕнерчăк-хăмăт, тилхепе, чĕлпĕр т. ыт. вĕрен таврашĕсем хатĕрлетпĕр. Вырăнти удобренисем хатĕрлесе турттарас ĕç те сарăлсах пырать. Ку таранччен эпир уя 240 лав ытла тислĕк кăлартăмăр, 8 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 8 центнер кĕл пухрăмăр. Ку тĕлĕшпе пире туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем ĕнтĕ темиçе центнер кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлерĕç, вĕсемех çĕрулми тăррисене касса хатĕрлеме тытăнчĕç.

Тăван Хĕрлĕ Çар воинĕсем туса пыракан çĕнтерӳсем пире тата тимлĕрех ĕçлеме хавхалантараççĕ. Эпир кăçал темле çанталăк тăрсан та пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешетпĕр.

А. Клочков,
Çĕмĕрле районĕнчи „Ударник" колхоз председателĕ.

1943 çулшăн аш-какай параççĕ

ШĂХАСАН. Сталин юлташăн приказне вуланă хыççăн Кăшнаруйĕнчи „Прожектор", Ямпахри „Майăн 1-мĕшĕ", Ухман ялсоветне кĕрекен „Ямурза" колхозсем государствăна 1943 çулшăн аш-какай парса татрĕç. Çавăн пекех „Активист" колхоз 1943 çулшăн государствăна 12 центнер, Киров ячĕпе тăракан колхоз 16 центнер аш-какай пачĕç.

В. Веселов.

Ют çĕршывсенче

Общинăсен палатинче химиллĕ вăрçă пирки ыйтса пĕлни

ЛОНДОН, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 24-мĕшĕнче консерватор Парбрик общинăсен палатинче çапла ыйту панă: Германия Англие хирĕç пĕтĕм вăйпа вăрçĕ, çав вăрçăн анлăшĕ çинчен халь пĕлсе тăма та май çук, тесе февралĕн 19-мĕшĕнче Геббельс тухса калани не правительство шута илнĕ-ши? Англи аллинче Германин çарĕпе пĕрле пĕтĕм гражданла халăхне те вĕлерсе пĕтерме çителĕклĕ таран отравляющи веществосем пурри çинчен, Англие хирĕç отравляющи веществосем яма тăрсанах Англия та çавăн пекех ответ пама хатĕр пулни çинчен Германи халăхне радио тăрăх е урăх майпа пĕлтерме шутлать-и премьер-министр?—тенĕ.

Эттли çапла ответ панă: Геббельс тухса каланине Парбрик тĕрĕс ăнланать тесе шутламастăп эпĕ, тенĕ. Химиллĕ майсемпе вăрçас пулсан Англи правительствин позицийĕ мĕнле пуласси не премьер-министр 1942 çулхи майăн 10-мĕшĕнче тунă хăйĕн заявленийĕнче каласа панă. Вăл ответ халĕ те улшăнмасть, тенĕ.

Общинăсен палатинче Швеция Германи валли тральщиксем туни çинчен ыйтса пĕлни

ЛОНДОН, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Общинăсен палатин ларăвĕнче консерватор Томас Мур тинĕс министрĕнчен Александертан çапла ыйтнă: Швецире Германи валли тăвакан суднăсем çинчен Сирĕн епле пĕлтерӳсем пур? тенĕ.

Хăйĕн çырса панă ответĕнче Александер çапла каланă: Англин тинĕс министерстви илнĕ сведенисем тăрăх, Швеция Германи заказĕ тăрăх темиçе тральщик тăвать, тенĕ. Александер каланă тăрăх, вăл тральщиксен конструкцийĕ пирки те министерство сведенисем илнĕ. Вĕсенчен ĕнтĕ вăл тральщиксемпе вăрçă ĕçĕнче усă курма шутлани паларать. „Вăрçакан çĕршыв панă заказ тăрăх нейтральнăй çĕршывра суднăсем (вăрçă ĕçĕнче усă курма юрăхлă суднăсем) туни е вĕсене оборудовани пани,—тенĕ Александер,—пĕтĕм тĕнчери правăна хирĕç пырать. Çавăнпа та ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви Англи посланникне çав ыйтăва Швеци правительстви умне питĕ çирĕппĕн лартма хушнă", тенĕ.

АНГЛИПЕ АМЕРИКА АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Нюрнберг çине тăвата моторлă бомбардировщиксем вĕçсе пырса тапăннă чухне хула çине икĕ тата тăвата тоннăллă бомбăсем тата вут хыптаракан бомбăсем нумай пăрахнă. Хулара питĕ вăйлă взрывсем пулнă, вăйлă пушарсем тухнă. Вĕсен тĕтĕмĕ темиçе пин фут таран çӳлелле хăпарнă.

Нюрнбергра шултăра çар заводĕсем пур, вĕсем тĕрлĕ çар хатĕрĕсем туса кăлараççĕ.

Февралĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировка тăвакан авиацийĕн самолечĕсем Кельн çине вĕçсе пырса тапăннă. 1942 çулхи май уйăхĕ иртнĕренпе çав хула çине çавăн пек вăйлăн бомбăсем пăрахманччĕ-ха.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ВИЛЬГЕЛЬМСХАФЕНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви тата США-н Европăра çапăçакан хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕрле кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: февралĕн 26-мĕшĕнче, кăнтăрла, Америкăн „Вĕçекен крепость Б-17" тата „Диберейтор Б-24" йышши бомбардировщикĕсем Вильгельмсхафен çине вĕçсе пырса тапăннă.

Бомбăсем Вильгельмсхафен докĕсем çине ӳкни паллă пулнă. Тăшманăн авиацийĕ Америка бомбардировщикĕсене вăйлăн хирĕç тăнă. 7 бомбардировщик хăйсен базине таврăнман

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен вăйĕсен Çурçĕр Африкăри штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕрти Тунисăн сарлака фронтĕнче союзниксен войскисем тăшманăн атакисене сире-сире пăрахнă.

Кассерин районĕнче тăшман каялла чакса пырать. Сицилирен кăнтăртарахра союзниксен авиацийĕ февралĕн 26-мĕшĕнче тăшманăн пĕр карапне путарнă, 3 карапне вут тивертнĕ.

Мароккăри радио пĕлтернĕ тăрăх, генерал Жиро ертсе пыракан француз войскисен чаçĕсем Сбиба секторĕнче 25 километр малалла куçнă (Сбиба—Кассеринтан 30 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре).

США-Н ÇĔРШЫВ ТУЛАШĔНЧИ ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, çарĕç министрĕ Стимсон çапла каланă: хальхи вăхăтра США-н çĕршыв тулашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсем 1.300 пин çын шутланаççĕ, тенĕ

НИМĔÇ АЭРОДРОМĔСЕМ ÇИНЧЕ 15 ÇУЛХИ АЧАСЕМ ĔÇЛЕÇÇĔ

ЛОНДОН, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). „Дейли экспресс" хаçат çапла пĕлтерет: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра гитлерла войскăсем пысăк çухатусем тӳснине пула Гитлер аэродромсенче ĕçлекенсене пурне те мобилизацилеме шут тытнă. Вĕсен вырăнне ĕçлеме 15 çулхи ачасене лартаççĕ.

ФРАНЦИ ÇАМРĂКĔСЕМ ЛАВАЛЬ ПĔЛТЕРНĔ МОБИЛИЗАЦИРЕН ПЫТАНАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Францири тĕрлĕ хуласенчен пĕлтернĕ тăрăх, оккупациллĕ влаççем тата Лаваль полицийĕ Франци çамрăкĕсене ĕç повинноçĕ йĕркипе ĕçлеттерме мобилизацилемелли çинчен Виши „правительстви" кăларнă декрета пурнăçа кĕртме тытăннă. Призыв пункчĕсене пыма кирли çинчен чи малтанах квалификациллĕ пиншер рабочисем, магазинсенчи, ательесенчи, çĕвĕç мастерскойĕсенчи служащисем повесткăсем илнĕ. Германие вăйпа илсе кайнă çамрăк французсенчен нумайĕшне оборонăллă укрепленисем тунă çĕрте ĕçлеттерни çинчен хыпар илнĕ.

Çамрăк французсем гитлерла „вербовщиксене" хирĕç хастарлăн кĕрешеççĕ. Тулузăра ĕç повинноçĕн „бюровне" пыма повесткăсем илнĕ çамрăксем хула таврашĕнче пытанса пурăнаççĕ. Нимĕçсем çавăн пеккисене хытă шыраççĕ, анчах та тупаймаççĕ. Лионра Германие яма палăртса хунă çамрăксемпе специалистсем хуларан тараççĕ, ялсене кайса пытанаççĕ. Хресченсем вĕсене хапăл туса йышăнаççĕ, вĕсене пур майпа та пулăшаççĕ. Çапла тарнисен шучĕ пĕрмаях ӳссе пынă пирки нимĕçсен Лионри оккупациллĕ влаçĕсем приказ кăларнă. Вăл приказ тăрăх, мобилизацирен пăраннăшăн нумай вăхăт хушши тĕрмене хупмалла е вĕлермелле. Гитлерла чура хуçисен çав приказĕ хулари халăха вăйлăн хумхатнă.

ФРАНЦИ ХУЛИСЕНЕ ЛАВАЛЬ ГИТЛЕРОВЕЦСЕНЕ «ТАРА ПАРАТЬ»

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри „Форин Афферс" бюллетень пĕлтернĕ тăрăх, французсен пысăк хулисемпе порчĕсене чылайĕшне Лаваль Германие 50 çуллăха „тара пама" йышăннă. Вăл шута Дюнкерк, Па-де-Кале, Булонь хулисем, çавăн пекех Нор тата Па-де-Кале департаменчĕсем кĕреççĕ. Ле Фрепор тавра 30 миля сарлакĕш зонăна та „тара пама" йышăннă. Çакăншăн Гитлер Лавале унăн ĕçĕнче пур майсемпе те пулăшса тăма пулнă.

--о--

Пĕлтерӳ

Мартăн 3-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, ВКП(б) Горкомĕн Парткабинетĕнче (Чувашская ур., 6) докладчиксемпе беседчиксем валли çак темăпа ушкăнла консультаци пулать: «Мартăн 8-мĕшĕ—пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен коммунистла кунĕ».

Консультацие ВКП(б) Горкомĕн лекторĕ Давтян юлташ ирттерĕт.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Фронтовиксен çырăвĕсем

1. Эпĕ 39 фрица леш тĕнчене ăсатрăм

Юнĕçен Гитлер хăйĕн вăрă-хурахла йыттисене пирĕн чечекленекен Тăван çĕршыв çине кĕртсе янă чухне вĕсене пирĕн мĕнпур пуянлăха çавăрса илме, Совет хулисемпе ялĕсене пĕтерсе тăкма, совет халăхне чуралантарма хушса янă. Анчах вĕсен çăткăнла шухăш-кăмăлĕсем путланса пыраççĕ. Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене вăйлăн пĕтерсе пырать.

Эпĕ — снайпер. Фронта килнĕренпе 39 фрица леш тĕнчене ăсатрăм, — вĕсене малашне татах, Совет çĕрĕ çинче пĕр нимĕç юлмиччене х, пирĕн войскăсем татăклă çĕнтерӳ тăвиччене х вĕлеретĕп.

Эпĕ сире кĕскен хамăн фронтри ĕçсем çинчен пĕлтересшĕн. Снайпер ĕçĕн ăнăçлăхĕ пуринчен ытларах вăл огневой позицие суйласа илме пĕлнинчен килет. Эпир Бондаренко сержантпа ялан тенĕ пекех çакăн пек тăватпăр: унпа пĕрле малти линие пăхса çавăрăнатпăр, çапăçу вырăнĕсене тимлĕн пăхса тухатпăр, нимĕçсем çӳремелли çулсемпе сукмаксем ăçтан иртнине сăнатпăр, вĕсен траншейисемпе блиндажĕсем патне пымалли çул ăçтине шыраса тупатпăр. Ун хыççăн «ухата» тумалли меллĕ участока суйласа илетпĕр. Каç пулса килсен, унта тухса хамăрăн огневой позицие майлаштаратпăр. Снайперăн çапăçури вырăнне суйласа илнĕ чухне çакна асра тытмалла: тăшман унăн патне пыма ан пултартăр.

Огневой позицие суйласа илнипех тата ăна çапăçусем валли хатĕрленипех ĕç пĕтмест-ха: Кунсăр пуçне тата тепĕр икĕ-виçĕ запаслă ячейкăсем (окопсем) хатĕрлемелле.

Пĕррехинче çапла пулчĕ. Бондаренко сержантпа «ухатана» тухрăмăр. Çапăçмалли вырăна меллĕн суйласа илтĕмĕр. Вырăнĕ тăшман оборонинчен 250 метрта анчах. Пĕр сукмака асăрхарăмăр. Çав сукмак уçă вырăнта тăсăлса выртать. Çавăнпа фрицсем ун тăрăх çĕрле кăна çӳреме пултараççĕ. Кăнтăрла курăнсанах эпир вĕсене мушка çине илетпĕр. Çав ирхине нимĕçсем ăна йывăçпа маскировка тума шутланă. Вĕсем ĕçленĕ вăхăтра эпĕ вĕсем çине икĕ хутчен петĕм. Пульăсем тĕл лекнĕ. Анчах хамăра та йывăр килсе тухрĕ. Вĕсен пулеметчикĕсем пире шыраса тупрĕç те урса кайсах пирĕн çине персе тăма тытăнчĕç. Запаслă окопсем пулман пулсан, чăнах, чĕррĕн юлаймастăмăр пулĕ.

Хĕлле траншейăсенчен е блиндажран инçе мар чавса хатĕрленĕ окопсенчен «ухата» тума лайăхрах. Кун пек тусан улшăна-улшăна ăшăнма пулать.

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ пире, воинсене, çапăçури пултарулăха ывăнма пĕлмесĕр ӳстерсе пыма приказ пачĕ. Эпир тăшман войскисене пырса çапассине вăйлатса пырăпăр, тăшмана ывăнма пĕлмесĕр тата çине тăрса хĕвеланăçнелле хăваласа пырăпăр.

А. СОЛОВЬЕВ.
Кĕçĕн сержант-снайпер
484-мĕш почта, 32-мĕш часть.

2. Пĕрлехи вăй тăшмана пĕтерме пулăшĕ

Юратнă земляксем, фронтовик-комсомолецсенчен хĕрӳллĕ салам йышăнăр.

Эпир, Чăваш республикинчен фронта килнĕ комсомолецсем, „Правда" хаçатра ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ П. Михайлов юлташ Сталин юлташ патне янă телеграммăна тата Сталин юлташ Чăваш республикинчи комсомолецсемпе çамрăксене, боевой самолетсен „Комсомолец Чувашии" ятлă эскадрильне тума 6.000.000 тенкĕ укçа пухнăскерсене, саламласа ответленĕ телеграммăна пĕрле пухăнса вуларăмăр.

Эпир, чăваш халăхĕн ывăлĕсем, эсир фронта пулăшнипе хавхаланса, нимĕç ирсĕрĕсене малашне татах та вăйлăнрах çĕмĕрсе пыма сăмах паратпăр. Тăшмана Совет çĕрĕнчен тасатас ĕçшĕн эпир хамăрăн пурнăçăмăрпа пĕтĕм вăй-хала хума та хатĕр.

Тăшман анлă Атăл патне çывхарнă вăхăтра эпир ăна хӳтĕлессишĕн хамăрăн кăкăрсемпе тăтăмăр. Эпир Атăлшăн улăпсем пекех çапăçрăмăр. Çук, нимĕçсем нихăçан та Атăлран шыв ĕçеймĕç.

Тылпа фронт хушшинче пĕрлĕх çирĕпленсех пырать. Çак пĕрлехи вăй тăшмана пуçĕпех пĕтерсе тăкма пулăшĕ.

Тылри юлташсем, эпир сире фронта пулăшас тĕлĕшпе татах та пысăкрах ĕçсем тума сывлăх сунатпăр.

Комсомолец-фронтовиксем: гварди сержанчĕ А Лукин, гварди старшини И. Спиридонов, гварди красноармеецĕ И. Сергеев.

3. „За отвагу" медаль илме тивĕçлĕ пултăм

Сывă-и тăванăмсем, аттепе анне! Сире красноармеецла хĕрӳллĕ салам яратăп.

Каç. Окопра выртатăп. Хаçатсем çинче СССР Верховный Совет Президиумĕн Указне вуларăм. Хумханатăм. Наградăланă боецсемпе командирсем хушшинче манăн хушаматпа ятăм та пур. Совет правительстви мана „За отвагу" медаль панă. Ку вăл—пирвайхи çапăçусемшĕн кăна-ха. Малта татах та вăйлă çапăçусем кĕтеççĕ. Эпир юратнă наркомăн приказне пĕр пăркаланмасăр тӳррĕн пурнăçа кĕртĕпĕр!

Н-ски стрелковăй полкăн партторганизацийĕ мана парти членĕн кандидатне илчĕ. ВКП(б) членĕн аслă ятне хĕрӳллĕ çапăçусенче тӳрре кăларăп. Командовани халĕ мана ВЛКСМ полкри бюровĕн секретарĕ турĕ. Ĕçлес кăмăл анчах кирлĕ. Вăл пур. Апла пулсан, ĕç ăнăçлăн пырасса шанатăп.

Çапла, тăванăмсем, манăн фронтри пурнăç. Киле çĕнтерӳпе таврăнăпăр.

Салампа Яков Зайцев.
Действующи Хĕрлĕ Çар.

Яков Васильевич Зайцев—Вăрмар районĕнчи „Заря" колхозран.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Автоуправлени тата „Трансэнергокадры" Канашри автошкул шоферсен курсне вĕренме илет.

Вĕрентессине кăнтăрла та, каçхине те вĕрентеççĕ. Вĕренме кĕмелли условисем çинчен автотранспорт конторисенче тата Канаш автошкулĕнче ыйтса пĕлмелле.

Заявленисене 1943 çулхи мартăн 15-мĕшĕччен илеççĕ.
2—2.

ЧАССР Наркомпищепромĕн Чăвашпищеснабсбытне старши бухгалтер тата ответисполнитель кирлĕ. Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Урицки урамĕ, 15.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НП 959 Типография № 1. Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.